Вырăнти самоуправлени

Ял Совечĕсенчен ял тăрăхĕсем таран

Пур çĕрте те ял Совечĕсене 1918 çулхи январь – март уйăхĕсенче йĕркеленĕ. Вĕсем Совет влаçĕн аялти пусăмри органĕсем пулса тăнă, ял Совет членĕсене вырăнта пурăнакансем суйланă. Пĕрремĕш Совет Конституцийĕпе – РСФСР Конституцийĕпе – вĕсене вырăнти пурнăç ыйтăвĕсене татса парассипе уйрăм правасем панă.

Малтанхи вăхăтра Советсен полномочийĕ 3 уйăхлăх кăна пулнă. 1924 çултан тытăнса полномочи срокне çулталăка çити тăснă. Ял Совечĕсен сечĕ çирĕп пулман.

Пĕрлехи территори единицине – район ăнлава – 1927 çулта ВЦИК постановленийĕпе пурнăçа кĕртнĕ. Ун хыççăн Чăваш АССР-не районсем çине уйăрма тытăннă.1920-мĕш çулсен вĕçĕнче пĕчĕкрех ял Совечĕсене пĕрлештерме пуçăннă. Анчах та ун хыççăн та улшăнусем пулнă.

Республикăна районсем çине уйăрассипе ĕçсем пĕр тикĕс пулса пыманнипе халĕ Муркаш районне кĕрекен ялсем тĕрлĕ вăхăтра пĕр ял Советĕнчен теприне, пĕр районтан теприне куçнă.

1944 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче Муркаш районĕ Сĕнтĕр районĕнчен 18 ял Совечĕ, Ишлей районĕнчен – 9, Элĕк районĕнчен – 3 йышăннă. Хыççăн вара районăн территори улшăнăвĕсем 1950 тата 1960-мĕш çулсенче те пулман мар.

1950-мĕш çулсенче колхозсене пĕрлештерсе пысăклатма тытăннă. Çавна май ял Совечĕсен сечĕ те улшăнса пынă, ялсене те пĕр ял Советĕнчен теприне кĕртнĕ.

Хыççăнхи çулсенче те ял Совечĕсен сетьне малалла йĕркелесе пырассипе ĕçсем пынă. Колхозсене пĕрлештерсе пысăклатассин вăрçă хыççăнхи иккĕмĕш тапхăрĕ 1959 çулхи ноябрьтен тытăнса 1960 çулхи июльччен пырать. Кунпа пĕрлех ял Совечĕсем те пĕрлешеççĕ.

1991 çулта Муркаш районĕнче 2 ял Совечĕ çĕнĕрен йĕркеленĕ: Хорнуй тата Ярапайкасси ял Совечĕсем. Унччен Муркаш ял Советне кĕнĕ Тойкилтĕ, Платкасси, Хорнуй, Шаптак ялĕсем Хорнуй ял Советне куçнă. Ярапайкасси ял Совечĕ Шурча ял Советĕнчен уйрăлнă.

Малтанхи вăхăтра ял Совечĕсен вырăнти ыйтусене татса парассипе хăй тĕллĕнлĕхĕ ячĕшĕн кăна пулнă. Вĕсем хăйсем çине хунă патшалăх полномочийĕсемпе усă курса патшалăх ĕçне-хĕлне туса пынă кăна.

1990-мĕш çулсенче влаç хутшăнăвĕсен системинче улшăнусем пулса иртрĕç. РСФСР Конституцине кĕртнĕ çĕнĕ положенипе килĕшӳллĕн вырăнти Советсем патшалăх влаçĕн халăх суйлакан органĕн пĕрлехи системине кĕме пăрахрĕç. Апла пулин те тĕрĕссипе майĕпен улшăнусем кĕртнипе ку енĕпе практикăра палăрăмлă улшăнусемех тума май килмерĕ, ял Совечĕсем вырăнти самоуправлени органĕсем пулса тăраймарĕç.

1993 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Конституцине йышăннă май хальхи вырăнти самоуправлени системин çĕнĕ тапхăрĕ тытăнать. Çакă патшалăхăн пĕтĕм территорийĕнче муниципаллă влаç тытăмне ĕçлеттерме пуçăнма май пачĕ.

1990-мĕш çулсен вĕçĕ тĕлне вырăнти самоуправленин право тытăмне туса хунă темелле. Муниципаллă законодательствăна туса хатĕрлемелли майсене палăртнă, ку сфера валли специалистсем хатĕрлес ĕçсем тытăннă.

Вырăнти самоуправлени историйĕн черетлĕ тапхăрĕ 2003 çулта тытăнать. Октябрĕн 6-мĕшĕнче «Раççей Федерацийĕнче вырăнти самоуправление йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» 131-мĕш номерлĕ Федераллă саккун йышăнчĕç.

2005 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнче Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсен суйлавĕ иртрĕ. Районта 5 çуллăха Муркаш районĕн пуçлăхне, ял тăрăхĕсен 16 пуçлăхне, депутатсен районти Пухăвĕн 25 депутатне, депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен 185 депутатне суйласа хăварнă. Çĕнĕрен суйланă органсем 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче ĕçе тытăнчĕç.

Вырăнти самоуправлени ĕçĕ-хĕлĕ чи малтанах вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене оперативлă, кунта пурăнакан çынсен интересĕсене тĕпе хурса татса пама, пĕрлехи ĕçе ытларах çынна яваçтарма май пуррипе çыхăннă. Анчах та çакна манма кирлĕ мар: кирек епле ĕçри ăнăçу та чи малтанах хамăртан, çынсенчен килет.

Л. ТАРАСОВА,
район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.

Суд материалĕсем тăрăх

«Маньяка» тытса чарнăшăн...

– Москакасси тăрăхĕнче маньяк çӳрет. Çĕрле хĕрăмсене хăвалать, тапăнса тытсан мăшкăллать, - пăшăлтатнă сисчевлĕ кинемейсем.

– Хăй вăрăм пальтопа, урине хĕрарăм пушмакне тăхăнать, хура чăлхаран тунă маскăпа, аллинче вара вăрăм шприц,- евитленĕ вĕсене шăлсăр карчăксем...

Чăн та, пулнă-ши маньяк, пулман-и – ăна çирĕплетсе паракансем çук. Правăна сыхлакан органсем те кун пирки шарламаççĕ. Анчах Хачăк ялĕсен вăйсăр пайĕ каç пуласпа пĕччен урама тухма пăрахнă имĕш.

Тĕрмерен тин тухнă пĕр услапăн та чапа тухас килнĕ иккен. Мĕнле паттăрла ĕç тăвас ши тесе аллине хыçса çӳренĕ вăл. Пĕррехинче каç пуласпа, нарăс уйăхĕн 4-мĕшĕнче, алли саççим кĕçтесе каять. Нимĕнпе те чарма çук. Хаяррине лӳккесен те чарăнман. Пач урăхла, икĕ алли те, ик ури те вырăнтан тапратса янă тет çакна. Шыракан тупать. Услап утать урампа ик аллине силлесе. Пăхать – тăра парать пĕр шăл çемми – каччă шутне те кĕреймен çамрăк. Пĕрех туртса ярать çăвар урлă, унтан тапать, çапать кăкăрĕнчен. Шкул ачипе уçăлма тухнă йытă çурине те тапса вĕçтерет. Çук, канаймасть хĕнесе, ĕнселесе çухавран сĕтĕрсе илсе каять шкул спортзалне.

Кунта ял çамрăкĕсем мечĕк кустаркалама пуçтарăннă.

- Братва, савăнăр, эпĕ маньяка тытрăм, - тесе пĕлтерет. Кунти çамрăксем çак услап çăвар çинчи сĕчĕ типсе çитмен «маньяка» малалла хĕненине пăхса савăнса тăнă. Аллисем аран кĕçĕтме пăрахнă услапăн. Анчах ачана килте чунран кĕтекен амăшĕ патне яман – малалла мăшкăлланă: ачана вăйран кайиччен тĕрлĕ спорт упражненийĕсем тутарнă. Ку та çитмен, кайран çĕрле ачана сăра барне тем тума илсе каять... Кайран... суд тенкелĕ. Кайран ... приговор.

«18-ом часу 04 февраля 2009 года гражданин **К.**, находясь в помещении спортзала Москакасинской СОШ, расположенного по адресу, д. Москакасы Моргаушского района Чувашской Республики, в ходе ссоры, возникшей на почве личных неприязненных взаимоотношений несовершеннолетним **М.**, умышленно, с целью причинения физической боли и телесных повреждений, нанес последнему множество ударов руками в область туловища и грудной клетки, причинив несовершеннолетнему М. физическую боль.

Подсудимый К. в судебном заседании заявил, что обвинение ему понятно, согласен с предъявленным обвинением, свою вину признает полностью, поддерживает ходатайство о постановлении приговора без проведения судебного разбирательства, ходатайство заявлено им добровольно и после консультации с защитником. Последствия постановления приговора без проведения судебного разбирательства осознает.

Рассмотрев материалы дела, мировой судья пришел к выводу, что предъявленное подсудимому обвинение обоснованно и подтверждается доказательствами, собранными по уголовному делу. Действия подсудимого К. предварительного расследования по ч. 1 ст. 116 УК РФ квалифицированы правильно. Суд также квалифицирует действия по ч. 1 ст. 116 УК РФ как нанесение побоев, причинивших физическую боль, не повлекших последствий, указанных в ст. 115 УК РФ.

При таких обстоятельствах мировой судья счел возможным постановление приговора без проведения судебного разбирательства.

При назначении наказания мировой судья учитывает характер и степень общественной опасности ранее совершенного преступления, обстоятельства, в силу которых исправительное воздействие предыдущего наказания оказалось недостаточным, характер и степень общественной опасности вновь совершенного преступления, обстоятельства, смягчающие и отягчающие наказание, личность подсудимого, также влияние назначенного наказания на исправление осужденного и на условия жизни его семьи.

К. свою вину в совершении указанного преступления признал полностью, в содеянном раскаивается, явился с повинной (л.д. 4), активно способствовал раскрытию преступления.

Как личность К. по месту жительства в целом характеризуется удовлетворительно, но злоупотребляет спиртными напитками, бывают случаи нарушения общественного порядка, проживает с матерью, отношения с матерью хорошие (л.д. 63), на учете у нарколога и психиатра не состоит.

На основании вышеизложенного, с учетом мнения государственного обвинителя, потерпевшего, его законного представителя, защитника, и с учетом того, что К. имеет постоянное место работы, на основании изложенного, руководствуясь ст.3 16, 303,3 04, 307-310 УПК РФ, мировой судья приговорил, К. признать виновным в совершении преступления, предусмотренного ч. 1 ст. 116 УК РФ и назначить наказание в виде обязательных работ на срок 160 (сто шестьдесят) часов. Меру пресечения до вступления приговора в законную силу в отношении К. оставить прежнюю — подписку о невыезде».

Çапла пулать вăл пурнăçра: йытă çурине уçăлтарма тухсан та маньяк ятне илтсе патак çиетĕн. Юрать-ха, пирĕн гуманнăй суд кун пек услапсене юсанасса шанса 160 сехет çеç ĕçлемелле тăвать. Тата ман пĕлекен çынсенчен ыйтас килет: «Мĕн-ши вăл «Статья 117. Истязание»?

Д. СУНДЫРКИНА.

Астăвăм

Çав вăхăтсем асран тухмаççĕ

Района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнипе пĕрлех район хаçатне кăларма тытăннăранпа та çавăн чухлех вăхăт çитрĕ. Çавăнпа та унпа, ăна пичетлессипе çыхăннă самантсене те асăнса хăварас килет.

Эпĕ 1929 çулта çуралнă, Мулкачкассинче пурăнатăп. Çавăнтах кун çути курнă. 1-мĕш класа шкула Мăн Сĕнтĕре кайнă. Манăн пĕрремĕш учитель Матвей Иванович Багров пулнăччĕ. Атте ун чухне райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçленĕ. Кайран ăна урăх вырăна ĕçлеме куçарнă пирки 2-мĕш класа хамăрăн Оринин шкулĕнче вĕренсе пĕтертĕм. 3–5-мĕш классенче Хĕрлĕ Чутай районĕнче вĕренмелле пулчĕ.

1942 çулта аттене çара илсе кайрĕç. Çапла вара эпир аннепе хамăрăн Мулкачкасси ялне таврăнтăмăр. Хыççăн 8-мĕш класа вĕçличченех Оринин шкулне çӳрерĕм.

1944 çул пуçламăшĕнче Муркаш районне йĕркеличчен пире Сĕнтĕрте комсомол ретне илчĕç. Ун чухне комсомол райкомĕн секретарĕ Ф.А. Григорьева пулнăччĕ. Халĕ вăл Муркашра пурăнать.

Муркаш районне йĕркелесен районти организацисем валли унта вăрăм çурт çитмен пирки пулĕ район хаçатне Оринин ялĕнче пичетлесе кăларнине астăватăп. Хаçат редакторĕ Ф. Малышкин пулнă. Хаçата пичетлемелли çурт халĕ пурăнакан Вячеслав Прохорович Васильев килĕ вырăнĕнчеччĕ, ветучасток çуртĕнчеччĕ. Кайран вара ферма çывăхĕнчи тăмран купаланă çурта куçарчĕç.

Пирĕн «Красное Сормово» колхоз районта анчах мар, республикăра та малтисенчен пĕри пулнă. Ăна вăрçăччен те, вăрçă хыççăн та пултарулла çын Алексей Михайлович Моисеев ертсе пынă. Колхозра «Сормовец» хаçат тухса тăнă. Çавăн пирки пулĕ район хаçатне те малтанхи вăхăтра пирĕн патра пичетлеме шутланă.

Типографире ĕçлеме Милютакасси хĕрĕ, пирĕн хурăнташ Агния Филипповна Жирнова çӳретчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл вилни 2 çул иртрĕ. Кайран вăл типографире Муркашра та ĕçлерĕ.

Вăл 1951 çулта хăйсен ялĕнчи çартан таврăннă Леонид Николаевич Хлебниковпа семье çавăрнă. Упăшки халĕ 83 çулта, кĕçĕн ывăлĕпе пурăнать.

Типографи Орининта ĕçлеме çав ялта çитĕннĕ çамрăксем те лайăх астăваççĕ. 1934 çулта çуралнă Гурий Прокопьевич Иванов, халĕ инвалид, Çĕньял Оринин ялĕнче хăйĕн килĕнче пурăнать.

Агния Филипповнан пиччĕшĕ Александр Филиппович Жирнов пулнă. Вăл хăйсен ялĕнче вăрçă çулĕсенче тата вăрçă хыççăн ĕçлерĕ. Мулкачкассинче вара «Восток» колхоз председателĕнче вăрçă хыççăнхи 1946–1951 çулсенче манăн атте Антип Трифонович вăй хучĕ. Çавна май вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштеретчĕç.

Типографи Орининта пулнă чухне унта ĕçлеме Муркаш ялĕнчен Зоя ятлă хĕр ача çӳренине Г.П. Иванов лайăх астăвать. Вăл Орининта хваттерте те пурăннă. Кайран Муркашра типографире те ĕçленине пĕлет. Халĕ те Муркашрах пурăнать вăл.

Аса илӳсен çăмхине чылай тăсма пулать. Пĕр енчен унтанпа вăхăт нумай та иртмен пек туйăнать. Тепĕр енчен вара кусем вĕсем пирĕн çамрăклăх çулĕсем пулнă вĕтха. Халĕ ватăлтăмăр ĕнтĕ. Ун чухнехи пĕрле пулнă тантăшсенчен чылайăшĕ пирĕнпе паян çук. Мĕн тăван, вăхăт малаллах шăвать.

А. КАЛИНИН.
Мулкачкасси ялĕ.

Хамăрăн сывлăх – хамăр алăрах

Ырă канашпа пулăшрĕ

«Фунфурик» тесен аптекăсенче сутакан спиртлă шĕвеке ытларахăшĕ пĕлет ĕнтĕ. Уйрăмах ăна тутанса курнисем е халĕ те тутанакансем. Тĕрлисем пур вĕсем. Вăтамран 90 градуслă. Хакĕ пысăках мар: 100 гармм шĕвек кĕрекен кĕленче 10 тенкĕ ытларах кăна. Водка таврашĕ туянса тăккаланнинчен йӳнĕрех ларать.

Хăй вăхăтĕнче вара эпĕ хам та унпа пуçăма сахал мар минретнĕ. Анчах та юлашки вăхтра çавна сисме тытăнтăм: манăн куç ялăхрах курма тытăнчĕ, пӳре тата пĕвер те хăйсем çинчен систерсех тăчĕç.

Тавах Шура аппана. Сăмах май вăл пенсионерка, медицина сестри пулса ĕçленĕ. Шăпах вăл пулăшрĕ те ĕнтĕ мана çав сереперен хăтăлма. Çак шĕвексене ĕçнин сиенĕ пирки вăл мана тĕплĕ «лекци вуласа пачĕ». Ăна итлесе çине тăрсах çак шĕвексене ĕçме пăрахрăм. Мĕн тетĕр, юлашки вăхăтра хама лайăхрах туйма тытăнтăм. Пурăнас, ĕçлес кăмăл та ӳсрĕ. Куç та лайăхрах курма пуçларĕ.

Пĕлетĕп, йӳнĕрех тăракан шĕвекпе пуçа минретес шухăшлисем халĕ те сахал мар. Анчах та вĕсене çапла каланă пулăттăм: хăвăрăн сывлăхăра сыхлама тăрăшăр. Ăна кайран нимĕнле укçа-тенкĕпе те тавăрма май пулмĕ. Хам туйни-курнипе калатăп çак сăмахсене.

В. ПЕТРОВ.
Çатракасси ялĕ.

Ыр кăмăллăх

Çуралнă кун ячĕпе

Каршлăхри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен интернат çуртĕнче пурăнакансенчен ытларахăшĕ хăй вăхăтĕнче производство сферинче тăршса ĕçленĕ, экономикăна тĕреклетсе аталантарса пыма тăрăшнă. Вĕсем ĕç ĕмĕрне усăсăр пурăнса иртtermен. Çавна май кунта хӳтлĕх тупнă ватă çынсен çуралнă кунĕсемпе юбилейĕсене те чаплă лару-тăрура, аса юлмалла ирттерме тăрăшатпăр.

Нумаях пулмасть Василий Леонидович Леонидовăн çуралнă кунне паллă турăмăр. Çак кун ячĕпе ăна саламлама Муркашри куç курманнисен обществинчен Елена Никитина та пычĕ. Вăл Василий Леонидовича хаклă парне – магнитола тата алла çыхмалли калаçакан сехет – парнелесе чыс турĕ. Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекенсем вара концерт программипе саламларĕç.

Василий Леонидович хăйĕн çуралнă кунĕнче çавăн пек уяв саманчĕ туса панăшăн, ырă кăмăллă çынсем пурришĕн вĕсене пысăк тав сăмахĕ калать.

В. КРЮЧКОВА, культорг.

Сăн ӳкерчĕкре: ветерана çуралнă кун ячĕпе – парне.

Хатĕрлеме сĕнетпĕр

Çурхи сиплĕ курăксенчен

Серте салачĕ. Салат валли 3 ывăç тураса вĕтетнĕ серте илĕр, унта 2 апат кашăкĕ хăйма, тутă кĕмелĕх хырнă хĕрен ярăр.

Вĕлтĕрен яшки. Ку чухне вĕлтĕрен яшки çисе курман çын çук та пулĕ. Вĕлтĕрен яшки питĕ тутлă та çемçе апат. Чылайăшĕ апат хатĕрлес умĕн вĕлтĕрене 5 минута яхăн вĕретет.